*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

22 (2434) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
пуш, 26

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Пуйăс килет, пуйăс каять, ял çынни инçеваскать

Чукун çул çывăхĕнче пурăннăран Вăрмар районĕнчи Чупайсем ĕлĕкренпех Канаша, Хусана ĕçлеме çӳреççĕ. Хăшĕ-пĕри пахча çимĕç, аш-пăшпа сĕт юр-варĕ сутма Тутарстан тĕп хулине çул тытать. Çакнашкал çăмăллăх пуртан ку тăрăхра фермерсем те çук. Хура çĕр çинче тар тăкиччен ирхи пуйăспа ĕçе васкать ял çынни. Кам каяймасть – выльăх-чĕрлĕх усрать, пахча çимĕç çитĕнтерет. Пурнăçа саплаштарма çак майсемпе укçа-тенкĕ ĕçлесе илет.

Икшер-виçшер ĕне тытакан та пур ку тăрăхра. Вĕсене ятран асăнсан та çылăх пулмĕ: Владимир Галкин, Николай Константинов, Николай Артемьев, Олег Егоров, Владимир Сергеев тата Владимир Макаров çемйисем. Сăвакан виçĕ ĕне тытма çăмăл мар, паллах. Алевтина Васильева вара хĕрарăм пуçĕпе икĕ ĕне усрать. «Кăçал сĕт хакĕ хĕлле 25 тенке çитрĕ, – терĕç ял тăрăхĕн ĕçченĕсем. – Халĕ 18 тенкĕпе пуçтараççĕ. Сĕт хакĕ ӳснине кура ĕне шутне чакарма шутламасть ял-йыш».

Сыснана тупăшсăр выльăх шутне кĕртеççĕ кунта. Çавăнпа ăна пусса çимелĕх çеç усраççĕ. «Туяннă ашăн тути те çук. Хамăр çитĕнтерни пахарах», – палăртрĕ Вера Леонтьева.

Сурăх тытакан чылай. Патти ялĕнчи Владимир Ивановăн – 40-50 пуç, Чупайри Григорьевсен 100 пуç таранах. «Сыснапа танлаштарсан сурăха уйрăммăн пăхмалла мар, ăна туянакан та нумай», – пĕлтерчĕç хĕрарăмсем. Анчах хĕл каçарма ку выльăх валли те утă-улăм чылай хатĕрлемелле-çке. Çĕр пайĕсене нумай çул ӳсекен курăк ӳстереççĕ. Ăна çулма, турттарма техникăпа усă курать ял халăхĕ. Лашана мотоблокпа улăштарнă ку тăрăхра. Çĕр улмине те унпах лартаççĕ, кăлараççĕ. «Ăна пăхас, тăрантарас çук. Ун валли утă та хатĕрлемелле мар. Вăл хăвăртрах та ĕçлет, ывăнмасть те», – пĕтĕмлетрĕ калаçăвне Вера Николаевна. Хăйсем те нумаях пулмасть мотоблок туяннă иккен. «Хурçă ут» пурнăçра çул уçнине палăртрĕ.

Паллах, вăй питти хăть мĕнле ĕçе те парăнтарĕ. Ват çын вара ирĕксĕрех çĕр пайне ял тăрăхне каялла парать, ĕнине сутать. Хăшĕ-пĕри ватлăха пăхмасăр мăйракаллă шултра выльăх та тытать. 70 çулти Мария Яковлева пĕччен пурăнать пулсан та ĕне усрать. Пурнăç çитменрен мар, хăнăхнă ĕç ăна савăнăç кӳрет, выльăх-чĕрлĕхпе чунне йăпатать.

Пурнăç урапи хăй еккипе кусать. Ялта икĕ хутлă пысăк керменсем те çĕкленеççĕ, вĕсемпе юнашарах тайăлнă килçурт та ларать. Хăшĕнче кам пурăнни паламасăрах паллă. Ял тăрăхĕнче 1020 çын кун кунлать. Иртнĕ çул кунта 15 ача çуралнă, 10 çын вилнĕ.

Тăван тăрăх ял халăхне ватлăх кунсенче хăй патнех йыхăрать. Çавна май Мускавран, Çĕпĕртен килсе кунта çурт лартакансем те пур. Акă Юлия Семенова мăшăрĕпе Мурманск облаçĕнчен куçса килнĕ. Ватă çынра ял малашлăхĕ çук тейĕ хăшĕ-пĕри. Çапах та атте-анне çуртне юсаса çĕнетни те паха. Мăрьерен тĕтĕм тухни, хапха умне сукмак хывăнни те пĕлтерĕшлĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

ШУХĂШ



## Çĕрĕ çителĕклĕ, вăй хуракан çук

«Çĕрпе усă курмарăн – штраф тӳле», – асăрхаттарать пирĕн район хаçачĕ. Эпĕ ас тунă тăрăх – тин çеç чăмăртаннă çемьесем çĕр паман пирки уйрăлса тухса кил-çурт çавăраймастчĕç. Кĕтĕве тарăн çырма-çатрара çӳретнĕ май ĕне выльăх урине хуçасран чун çукчĕ. Çамрăк бригадир ларма çемçерех пултăр тесе урапа тĕпне утă хурса килнĕшĕн 7 çуллăха тĕрмене лекни те асрах.

Эпĕ Сахалин утравĕ çинче хĕсметре пултăм. Унта кайнă чух вырăнĕ-вырăнĕпе усă курман е этем ури пачах пусман çĕрсем вырăнне курсан тĕлĕнтĕм.

Борис Ельцин влаçа ларсан колхозсовхозсене аркатса çĕре халăха валеçсе пачĕ. Çĕрĕ çителĕклех, анчах халăх ĕçсĕр юлчĕ. Хуçалăхăн пур пек техникине хуçасем сутса ĕçсе-çисе ячĕç. Çирĕм çул иртсен хамăр йăнăша ăнланса илтĕмĕр. Мĕншĕн-ха пуçлăхсем халăхпа канашламасăрах пурнăçа арктма васкаççĕ?

Этем кун-çулĕ чечек пек: ирхине çуралать те каçхине шанать. Çакна шута илсен пĕрпĕринпе йĕркеллĕ, тирпейлĕ, çураçуллă пурăнмалла пек. Анчах çынна хапсăнчăк кăмăл пĕтерет. Мĕншĕн тесен унашкалли яланах çĕнтерет.

Паян чылай çĕр лаптăкĕ усăсăр выртать. Хресченĕн ăна сухаласа акма вăй-халĕ те, укçи-тенки те çук. Мĕншĕн тесен вăл ватăлчĕ. Ялта вара лаша та, техника та çук. Ĕне кĕтĕвне тытса яма çын юлмарĕ. Çав вăхăтрах çĕрпе усă курманшăн штраф тӳлеттерессипе хăратаççĕ.

Çĕре сухаласа çемçетмесĕр нимĕн те акаймăн. Механизатор та çук ялта. Хресчене хӳтĕлес вырăнне юнасах вăрçаççĕ.

Шухăшăма пуçлăхсенчен кам та пулсан вулатăрччĕ тесех çыртăм. Мĕншĕн тесен çак ыйту паян кашни ял çыннине пырса тивет.

**В. КОЖАНОВ.**
**Вăрнар районĕ.**

# Усă курман лаптăксене палăртаççĕ

Çитес икĕ çулта республикăра хуçасăр çĕр лаптăкĕсене пĕтĕмпех шута илессипе (инвентаризацилессипе) çине тăрсах ĕçлеççĕ. Çĕрпе тухăçлă усă курассишĕн лартнă çак тĕллеве. Пушă выртакан çĕрсене тупса палăртма халăха та явăçтарасшăн. Вăл е ку çĕр лаптăкĕ ăçта тата камăн пулнине вырăнта пурăнакансем тепĕр чухне пуринчен лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа вĕсем инвентаризаци ĕçне хастар хутшăнасса, малашне çĕре тухăçлă "ĕçлеттерме" хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтерессе шанаççĕ.

Ялсенчи пушă çĕр лаптăкĕсене икĕ тапхăрпа шута илеççĕ. Пĕрремĕшĕ кăçалхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче пуçланнă. Çак вăхăтра усă курман мĕн пур çĕр лаптăкне тупса палăртаççĕ.

Иккĕмĕш тапхăрта – кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче пуçланать – инвентаризаци кăтартăвĕ тăрăх пушă çĕр лаптăкĕсене çĕнĕрен йĕркелеççĕ.

Пĕтĕм ĕçе 2015 çулхи раштавччен вĕçлемелле.

Хуçасăр çĕрсене тупса палăртнисĕр пуçне хăйсен лаптăкĕпе тухăçлă е тĕллевлĕ усă курман харпăрлăхçăсене те шута илĕç.

Çак ĕç пысăк пĕлтерĕшлĕ, налук енчĕкне хулăнлатма, республика бюджетне пуянлатма май парать.

Пушă çĕр лаптăкĕсен пĕрлехи информаци реестрĕ те капла тулли пулĕ. Хальхи тапхăрта унта 134 çĕр лаптăкĕ (397 гектар) çинчен хыпар пур, çав шутра йӳне ларакан çурт-йĕр тума – 59 лаптăк (164), инвестици проекчĕсем валли – 75 лаптăк (233 гектар).

## Нумай ачаллă çемьесене

Пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне нумай ачаллă 4259 çемье çĕр вырăнĕ илме черете тăнă. Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Ирина Устенко пĕлтернĕ тăрăх – кунашкал çемьесем Шупашкар хулинче уйрăмах йышлă – 1460 (пĕтĕм йышăн 34 проценчĕ). Ун хыççăн Шупашкар районĕн (11 процент) Çĕнĕ Шупашкар хули (10) тăраççĕ.

Пуш уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне республикăра 2200 çемье тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ илнĕ: 1346-шĕ унта çурт-йĕр лартасшăн, 809-ăшĕ хушма хуçалăх тытса пырасшăн, ыттисем дача пек усă курасшăн. Çак тĕллевсене пурнăçлама 251,9 гектар уйăрнă.

Улатăр, Канаш, Пăрачкав тата Шăмăршă районĕсенче çĕр ыйтнă нумай ачаллă çемьесене пурне те тивĕçтернĕ.

Ирина Устенко нумай ачаллă çемьесене çĕр вырăнĕпе тивĕçтермелли çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртнĕ хыççăнхи проекта паллаштарнă. Унччен маларах çакна палăртмалла. Çуртйĕр тăвас ĕçе аталантарма пулăшасси çинчен калакан федераци саккунĕ Раççейри регионсене федераци харпăрлăхĕнчи çĕрпе те усă курма май парать. Апла нумай ачаллă çемьесене республика тата муниципалитет çĕрне кăна мар, федераци харпăрлăхĕнчине те пама пултараççĕ.

Килти хушма хуçалăх çинчен калакан федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн хушма хуçалăх тытса пыма ял территорийĕнчи çĕрпе те (пахча çĕрĕ), унăн тулашĕнчипе те (уйри çĕр) те усă курма юрать.

Саккун проекчĕ тăрăх – хушма хуçалăх тытса пыма çĕр лаптăкĕ илес текен нумай ачаллă çемьесен ăна хăш вырăнта – ялта е уйра – илме кăмăлланине заявленире палăртмалла.

## Утмăлăн хутшăннă

Ял территорийĕсене аталантарас тĕлĕшпе иртекен конкурса кăçал республикăри 60 ял тăрăхĕ хутшăнма кăмăл тунă. Проектсене кашни районтан тăратнă. Нумаях пулмасть ЧР Ял хуçалăх министерствин конкурс комиссийĕ вĕсене пăхса тухса суйласа илнĕ.

Кăçал проектсене пурнăçа кĕртме республика бюджетĕнче 22,2 млн тенкĕ уйăрнă. Конкурсра çĕнтернĕ проектсем ялти социаллă объектсене тĕпрен юсаса çĕнетме май параççĕ.

## Тĕплĕ хатĕрленнĕ

Елчĕк районĕнче çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен хуçалăхĕсем çурхи акана мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме тухнă. Комисси (ăна район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ ертсе пынă) чи малтан Тăрăм ял тăрăхне çитсе кунти хуçалăхсем çур акине тĕплĕ хатĕрленнине курса ĕненнĕ. Акмалли вăрлăх, çунтармалли-сĕрмелли материал çителĕклĕ, çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртнĕ.

"Рассвет" ял хуçалăх кооперативĕ уйрăмах тăрăшнă. Кунта мĕн пур техникăна юсанă. Кӳршĕсен çĕрĕсене "ĕçлеттернĕрен" акмалли лаптăк çулсерен анлăланать. Кăçал пăрçана 60 гектар çинче акасшăн, нумай çул ӳсекен курăк пуссине те пысăклатасшăн.

Пĕлтĕрхи çу типĕ килнине пăхмасăрах хуçалăхра кашни гектартан 32,4 центнер тырă пухса илнĕ. Коллектив кăçал та тухăçлă ĕçлесшĕн.

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 26.03 | 27.03 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | –2<br>+5 | –3<br>+4 |
| Юр çăвать | | ☂ | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 753 | 755 |

# Вăйсăр вутă сӳнет







С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем.

Сакăр вунă çултан иртнĕ кинемей ыйтусене çивĕччĕн хуравлать. Вырăс хĕрарăмĕ Вăрмар районĕнчи Пăртас ял каччипе мĕнле паллашнине пĕлес килчĕ те: "Качака ют пахчана кĕрсе кайнă та каялла тухма пĕлмен", – туххăмрах çавăрттарса хучĕ вăл. Шӳчĕпе кăмăла çĕкленĕ хыççăн çакна пĕлтĕмĕр. Çĕрпӳ районĕнче çуралса ӳснĕскерĕн амăшĕ вырăс пулнă. Вера Константиновна Шигильдеева чăвашла ăнланать, анчах чĕлхи ан çыхлантăр тесе унпа вырăслах пуплерĕмĕр. Пулас упăшкин Александр Викторовичăн тăванĕсем хĕрĕн ялĕнче пурăннă, çавăнпа каччă унта час-часах çӳренĕ. Паллашнă, çемье çавăрнă, ача-пăчаллă пулнă. Вĕсем пĕрлешнĕренпе кăçал 55 çул çитет.

Мăшăрĕпе мухтанать Вера Константиновна. "Лайăх упăшка лекрĕ", – тет. Кил картише кĕрсен эпир те çакна чухласа илтĕмĕр. Арçын çӳп-çапа типтерлĕ пуçтарнă та çунтарма хатĕрленетчĕ. Хирĕç сăмах чĕнменрен кашт айăплă пулнăн туйăнчĕ. Юрать сасса илтсе мăшăрĕ тухрĕ те ăнлантарчĕ. Йывăр чире пула çулла карланкине оперци тунă, çавăнпа каласаймасть. Тепĕр чухне мăшăрĕ те ăна (аллисемпе хăлаçланнине) ăнланса çитереймест, вара калас тенине упăшки хут çине çырать. Пит калаçасшăн пулнăран пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче 85 çул тултарнине Александр Викторович пире те хут урлă пĕлтерчĕ. 84 çулччен ĕç пăрахман вăл: ял валли шыв уçланă.

Кун пек каласан пысăк ял çинчен сăмах пынăн туйăнать. Анчах хĕл каçипе кунта 6 çемье кăна пурăнать. Пĕр хапха патне куç ывăтатăн – сукмак тĕлли-паллийĕ çук, хирĕçе пăхатăн – каллех çапла. Чаплă çурт алăкне те шаккаса пăхрăмăр – уçакан пулмарĕ, йытти кăна туртса çурасла вĕрчĕ. Пĕчĕк урампа анаталла утсан хапха патне çул уçнине асăрхарăмăр та Шигильдеевсем патне лекрĕмĕр. Чи ваттисем-мĕн вĕсем Пăртасра. Ăшă пӳлĕме кĕрсе тăрсан та, кашт калаçнă хыççăн та Вера Константиновна пире шанмарĕ курăнать. "Эсир хаçатçăсемех-и? Чееленсе çӳреместĕр-и?" – тесе çине-çинех тĕпчерĕ. Удостоверени кăтартма тиврĕ. Çакăн хыççăн та иккĕленме пăрахмарĕ хĕрарăм. Ăна кӳренмерĕмĕр эпир. Ара, пĕрре ултавçăсен серепине çакланнăран шикленĕвне ăнланмалла. Усăллă тесе тавар ирĕксĕр туянтарнă усламçăсем ватăсене. Пысăк укçа тӳленĕ лешсем. Кайран юрăхсăр тавара кăларса ывăтма тивнĕ.

"Вилес килмест, анчах пурăнма та йывăр, – тет Вера Константиновна. – Ватă, чирлетпĕр. Кӳршĕсем çук, никампа хутшăнаймастăн. Тепĕр чух тĕрмеринчен те япăх пек". Вăй пур чухне вăл ялти чиркĕве çӳренĕ. Халĕ кĕлĕсене тăрса ирттерме йывăр. Чиркӳ пурри те Пăртаса чĕрĕлĕх кĕртеймест. Маларах пирĕн куç тĕлне пулнă чаплă çуртра кăна (сăн ӳкерчĕкре) çамрăксем пурăнаççĕ-мĕн. Кил хуçи 50 çул тултарнă, арăмĕ висĕ çул кĕçĕнрех. Ырлаççĕ вĕсене ватăсем: çынпа кăмăллă, хутшăнаççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕн Таньăн ашшĕ вырăс. Пĕчĕк ялта вырăссемпе чăвашсем хутăшни сайра мар-мĕн.

Анчах малашне çапла пулĕ-ши? Хăй вăхăтĕнче кунта республикăри больницăн уйрăмĕ пулни, ахăртнех, яла тытса тăнă. Унта туберкулезпа чирлисене сипленĕ. Вера Константиновна унта хуçалăх сестринче ĕçленĕ, упăшки столярта тăрăшнă. Больница чиркӳ çуртĕнче вырнаçнăран ăна пĕрре мар хупнă, кайран çĕнĕрен уçнă. 1992 çултанпа çурта каллех чиркĕве панă.

Чиркӳллĕ яла çут çанталăк газĕ çитнĕ, колонкăра шыв та пур. Лавкка çук, анчах эрнере пĕрре автомашинăпа сутлăх тавар турттараççĕ. Шигильдеевсене ачисем кашни эрнерех хуларан килсе пулăшаççĕ. "Ашшĕ-амăшĕн килне темле пулсан та пăрахмĕç ĕнтĕ. Ачăрсем, тен, тава тивĕçлĕ канăва тухсан кунта тĕпленĕç", – пĕлес килчĕ ватăсен шухăшне. "Вĕсен ĕçлемелле, пенсие тухмалла. Ялта тĕпленес тесен курпун ӳстермелле. Хулара вĕсем хăтлă хваттерсенче пурăнаççĕ", – сăмаха пат татрĕ кинемей.

Тепĕр 10-15 çул пурăнасса шанманран ялăн малашлăхĕ пирки калама тытăнса тăчĕ. Кăшт тăхтанă хыççăн чун ыратăвне пытармарĕ. "Кӳршĕри ял (хăйсенчен 10 çухрăмра вырнаçнăскер) çухалчĕ вĕт. Çынсем ытти çĕре куçса кайрĕç. Çурт-йĕр те юлмарĕ. Ял пĕтнĕренпе çирĕм çул та çитет", – тесе пĕлтерчĕ.

Вера Константиновнăн упăшкин çемйине хăй вăхăтĕнче кулак тесе канăç паман. Кил хуçине инçете янă хыççăн мăшăрĕ ултă ачипе юлнă. Çĕр пӳрт чавса пурăннă. Кайран пĕчĕк çеç хуралтăна куçнă. Нимĕнле йывăрлăхран хăраман. Ачисем ял пурнăçне тăснă. Паян мăнукĕсем çитĕнеççĕ, анчах çумра мар. Вĕсемсĕр ял ăшшине туйăн-и вара?

**Ирина НИКИТИНА.**

АС ТĂВĂМ

# Ячĕ – мухтавлă, ĕçĕ – сумлă



Аркадий Айдак Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоза ертсе пыма тытăннăранпа 50 çул çитрĕ. Ял-йыш ăна пултарулăхĕпе хастарлăхне кура çак ĕçе шанса панă. «Вăл ертӳçĕрен те ытларах вăй хурать колхозра, – тенĕ В. Русское унăн кандидатурине сĕннĕ май. – Сиенлĕ йăласемпе кĕрешме те пултарать. Эпир вара ăна пулăшса пырăпăр». Ун чухне Аркадий Павлович 26 çулта çеç пулнă.

Юлса пыракан хуçалăха ура çине тăратма мĕн тери йывăр пулнине тӳрех ăнланнă вăл. Колхозăн парăмĕ те самаях пулнă. Тырпул тухăçĕпе те, выльăх-чĕрлĕх шучĕпе те мухтанма пултарайман. Ял йĕри-тавра вара тарăн вар-çырма сарăлса выртнă.

Пур ĕçе те алă вĕççĕн тунăран ĕç тухăçлăхĕ палăрман. Ял хуçалăхне механизацилесси пирки ун чухне ĕмĕтленме кăна пултарнă. Ячĕшĕн çеç тӳленĕрен колхозниксем ĕç йĕркине пăхăнман. Çавна май Аркадий Айдак вĕсемпе малтанах ăнлантару ĕçĕ, канашлусем ирттернĕ. Дисциплина çирĕпленсе пынă, комплекс бригадисемпе звеносем йĕркеленнĕ, ĕç кăтартăвĕ лайăхланнă.

Ял çыннисем пилĕк çултанах ырă улшăнусене асăрханă: шалу, тыр-пул тухăçĕ палăрмаллах ӳснĕ. Хуçалăх хăйшĕн çеç мар, уйрăм çын выльăхĕ валли те апат самаях хатĕрленĕ. Машина-трактор паркĕ çĕнĕ техникăпа пуянланнă, выльăх-чĕрлĕх йышланнă. 1970-1975 çулсенче темиçешер миллион тенкĕ тупăш илнĕ хуçалăх. Укçа-тенке кирлĕ пек тăкакланă: хăмла отраслĕне чĕртнĕ, эрозипе кĕрешнĕ, ял çыннине хушма хуçалăха аталантарма пулăшнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ентешĕсем çав çулсене халĕ юмахри пек аса илеççĕ. «Аркадий Павлович ертӳçĕре вăй хунă чухне эпир лайăх пурăннă», – теççĕ вĕсем. Ара, ĕçченсене тĕш тырпа çеç мар, комбикормпа та тивĕçтернĕ.

Хуçалăхсене пĕрлештерес юхăма «Ленинская искра» та хутшăннă. Малтанах «Борец», каярахпа «Правда», «Вперед» колхозсене хăй хӳттине илнĕ. Çапла вара 14 ял пĕр чăмăра пĕрлешнĕ. 1200 çын таранах ĕçе тухнă. «Пĕрлĕхре – вăй» тенешкел йывăр вăхăтра та парăнман хуçалăх, республикăри нумай-нумай колхоз пек арканман.

Ял халăхĕ çырма-çатрапа кĕрешме тытăннă. Юшкăна чарма шалчасем çапнă, çатан карта тытнă. Унсăр пуçне йывăç-тĕм чылай лартнă. «Кашнин 100 тĕпрен кая мар хунав лартса çитĕнтермелле» девиза пăхăнса ĕçленĕ. Паян йывăçсем тӳпенелле кармашаççĕ. Вĕсен лаптăкĕ 270 гектар йышăнать. Тури Ачак çывăхĕнче пĕве те чылай: тапăра анакан выльăха шăварма кашни ял патĕнчех пур.

Аркадий Павлович ентешĕсен сывлăхĕшĕн, усăллă канăвĕшĕн те тăрăшнă, пултарулăха тĕрлĕ енлĕ аталантарма условисем туса панă. Санаторирен пуçласа ӳнер шкулĕ таран çĕкленĕ, ут спортне (35 лаша тытнă) аталантарнă. Паллах, вăл пурнăçланă ĕçсене асăнса та пĕтереймĕн. Тăван халăхшăн, колхозшăн чунне пама хатĕр пулнă. Çавăнпах ĕнтĕ хăй хыççăн ырă ят хăварчĕ. Ăна хăй вăхăтĕнче СССРта çеç мар, Европăра та, Америкăра та пĕлнĕ. Туристсем, хаçат-журнал ĕçченĕсем Тури Ачака килсех çӳренĕ.

Материала хатĕрленĕ май Аркадий Павловичăн мăшăрĕпе Людмила Андреевнăпа телефонпа çыхăнтăм. Аркадий Айдак колхоз председательне суйланнăранпа 50 çул çитнине ял халăхĕ чаплăн уявланине пĕлтерчĕ вăл. «Турă янă çын», – тенĕ уявра ун пирки пĕтĕмлетсе. Çакна та асăнса хăварма кăмăллă: Аркадий Павловичăн çуралнă кунĕ – çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕ – тĕлне колхоз правленийĕ умне стела вырнаçтарма палăртнă. Çавăн пекех унăн пуçарăвĕпе йĕркеленĕ «Хресчен килĕ» музее юсаса çĕнетнĕ. Ытти хуралтăна улăштарма тивнĕ, çуртне çавнах хăварнă. Кунта малашне те туристсем килсе çӳрессе шанас килет. Вырăнти шкул вара халĕ унăн ячĕпе хисепленсе тăрать.

Шел те, хастар ертӳçĕ туса хăварнă кашни объектах сыхланса юлман паян. «Ӳнер шкулĕ саланчĕ, санатори шăпи те çавнашкалах, – терĕ Людмила Андреевна пăшăрханса. – Çаксемшĕн мĕн чухлĕ кулянман пулĕ вăл?! Кăна эпĕ халĕ тин ăнлантăм».

«Колхозшăн, халăхшăн тăрăшакан мăшăрпа пурăнма çăмăл пулман сире, паллах», – кăсăклантăм эпĕ. «Мана турă тӳсĕмлĕх, чăтăмлăх панă», – пулчĕ хурав.

Аркадий Айдак хăй хыççăн пуян ал çырăвĕ хăварнă. Вăл халĕ çемье архивĕнче упранать. Мăшăрĕ ăна час-часах вуланине палăртрĕ. «Люда, турă мана мĕн чухлĕ вăй, юрату панă. Нивушлĕ çак ĕçсене эпир санпа пĕрле тунă?» – тесе палăртнă вăл пĕр çырăвĕнче. Тепринче вара пĕрремĕш çур акине тухнине сăнланă. «Эпĕ кĕрешĕве тухатăп. Анчах мирлĕ кĕрешĕве», – тенĕ унта. Хăйĕн пурнăçĕнче 43 хутчен ака-суха ĕçне хутшăннă Аркадий Айдак. Ал çырăвĕ тăрăх – ирхине 5-6 сехетре правленире пулнă, çур çĕр иртсен çывăрма выртнă. Ĕçри вăхăтĕнче вара канăçне пачах çухатнă.

Аркадий Павлович пирĕнрен яланлăхах уйрăлса кайнăранпа çулталăк çурă иртрĕ. Унăн вилĕмсĕр ĕçĕсем, çутă сăнарĕ халăх асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр упранĕç. Ырă ят ылтăнран та хаклăрах-çке.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хаксем хăпараççĕ. Йӳнĕрехпе çырăнса юлма васкар!

**Раççей почти ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хаçат-журнал хакĕсене ӳстерессине çинчен пĕлтерчĕ. Сăмахран, II çур çуллăха "Хыпар" хаçата пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен 460 тенкĕ те 86 пуспа çырăнтараççĕ пулсан – акан 1-мĕшĕнчен 744 тенкĕ те 12 пус. Çакă, паллах, пире те – хаçат-журнал ĕçченĕсене – хытах шухăшлаттарать. Хаксен ӳснин сăлтавне Раççей почтин ертӳçисем федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрманнипе çыхăнтараççĕ. Чăннипех çапла: çĕр-шыв правительстви хаçат-журнала валеçнĕшĕн субсиди уйăрманни çинчен пĕлтернĕ. Хаçат-журнал кăларакансен ирĕксĕрех çĕнĕ условисенче ĕçлеме тивет. Вăрттăнлăх мар: чылай çын халĕ кирлĕ хыпара Интернет урлă маларах илет. Хальлĕхе пурин те пĕтĕм тĕнчен "эрешмен картине" кĕрсе ӳкмешкĕн май çукрах-ха. Вулакана аван ăнланатпăр: вăл кашни пуса шутлать. "Хыпар" Издательство çурчĕн тусĕсене тепре аса илтересшĕн: пирĕн хаçат-журнала ПУШ УЙĂХĔН 31-МĔШĔЧЧЕН ЙӲНĔ ХАКПА çырăнма васкăр. Вăхăт нумаях юлмарĕ – шутлă кунсенче почтальонпа тĕл пулма тăрăшăр. Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене "Чăваш пичетпе" "Советская Чувашия" хаçат киоскĕсенче тата редакцире альтернатива мелĕпе çырăнтараççĕ.**

**Акан 1-мĕшĕнчен пулакан хаксене таблицăра кăтартнă.**

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почтăра (ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен) | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ (пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен) | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | Почтăра | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 744-12 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 321-96 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 375-96 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 340-44 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 215-40 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 192-66 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 379-80 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-Кил | 43887 | 192-66 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319-08 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 185-04 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 140-36 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 310-92 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 743-58 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 280-44 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181-02 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143-52 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

**АСĂРХĂР: ÇĔНĔЛĔХ!**

**Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Хыпар» хаçата электрон мелĕпе çырăнса илме пулать. Çур çуллăх хак – 90 тенкĕ.**
**Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра.**

## Чăвашсен пĕрремĕш комбайнĕ

Паян акционерсен "Промтрактор" уçă пĕрлешĕвĕнчи цехран чăвашсен пĕрремĕш комбайнĕ – "АГРОМАШ – 4000" – тухать. Историллĕ çак саманта курма, çĕнĕ производствăпа паллашма Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен явапллă çынсем килсе çитнĕ.

Аса илтерер: пĕлтĕрхи кĕркунне Красноярск завочĕ хупăнсан мĕн пур пурлăха Шупашкара куçарнă. Ĕçре кирлĕ хатĕрхĕтĕре 700 автопуйăспа турттарса килнĕ. Каярах чикĕ леш енче туса кăларнă линисем туяннă. Ăсталăха алла илме чăвашсене Çĕпĕр специалисчĕсем пулăшнă. 2014 çул пуçламăшĕнче "Промтрактор" заводра çĕнĕ производство хута кайнă. Кирлĕ пулсан çулсерен 2000 машина таран кăларма пултарать.

Хальччен Красноярскра кăларнă "Енисей" комбайн моделĕсен никĕсĕ çинче çуралнă вăл. Механизаторсен сĕнĕвĕсене шута илсе техникăна модернизациленĕ. Малтанхи модельсемпе танлаштарсан çĕннипе ĕçлеме комбайнерсене темиçе хут меллĕрех, кабинăра компьютер, кондиционер тата ытти те пур.

Чăвашра комбайн туса кăларма тытăнни республикăшăн паха ĕнтĕ. Халĕ ĕçлекен уй-хир карапĕсенчен çурри ытларахăшĕ кивелнĕ. Вырмара ĕлкĕрсе пыма хăватлăх çитменрен ĕçси вăраха каять, тухăç ҫухалать. Вырăнта комбайнсем туса кăларсан лару-тăру улшăнмаллах.

## Пĕр пинрен иртнĕ

Иртнĕ эрнери кăтартусем тăрăх – çулталăк пуçланнăранпа республикăри 11 ял хуçалăх предприятийĕнче кашни ĕнерен 1000 кг ытла сĕт сунă. Комсомольски районĕнчи "Асаново" тата "Рассвет" кооперативсенче вăтамран 1450 тата 1036 кг суса илнĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи "Смак-Агро" пĕрлешӳре – 1153 кг, Муркашри Суворов ячĕллĕ хуçалăхра – 1011 кг, Шупашкар районĕнчи "Ольдеевская" агрофирмăра – 1120 кг. Етĕрне районĕнчи "Ленинская искра", "Родина", Елчĕк тăрăхĕнчи "Прогресс", "Яманчурино", "Победа", "Комбайн" хуçалăхсем те палăрнă.

Чăвашстат кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн республикипе кашни ĕнерен вăтамран 663 кг сĕт сунă (пĕлтĕрхинчен 21 кг ытларах).

# Кун-çул ахаль иртмен

Мĕн хаклă-ха пирĕн пурнăçра? Çынпа курса калаçни. Кашни тĕл пулу чуна савăнтарать, ăс-тăна пуянлатать. Пултаруллă çынпа курнăçни вара усăллă, пĕлтерĕшлĕ.

Çакнашкал маттур çынсемпе курнăçма тӳр килчĕ мана. Вĕсем – Муркаш районĕнчи Катăкуй ялĕнче пурăнакан Алексей Петровичпа Римма Михайловна Петровсем. Иккĕшĕ те – тыл ĕçченĕ.

Алексей Петровичăн çамрăклăхĕ çăмăл пулман. Ачалăхĕ вара Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтне лекнĕ. 7-мĕш класра вĕренекенскер çурлапа тырă вырнă, лашапа кĕлте турттарнă. Пĕр сăмахпа каласан, мĕн хушнă – çавна пурнăçланă.

Салтакран килнĕ хыççăн вăл партин аслă шкулĕнче вĕреннĕ, Калинин ячĕллĕ колхозра ĕçлеме тытăннă. Кĕске вăхăтрах çитĕнӳсем тума пуçланă. Çавна май ăна Мичурин ячĕллĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăха ертсе пыма шаннă. Ун чухне ялти пурнăç çăмăл пулман. Çапах патшалăх планне пурнăçланă. Сĕт те, аш та панă. Шетмĕ ялĕнче хуçалăх витисем çитменрен пĕчĕк пăрусене ял çыннисем çитĕнтернĕ.

1958 çулта Хĕрлĕ Чутай вăрманĕнчен çăка касса килнĕ, унăн хуппине сӳсе курăс тунă. Унран вара колхозниксем чăпта çапнă. Ăна халăхран 40-50 пуспа туяннă хуçалăх, Чул хулана 70 пуспа сутма кайнă. Çапла майпа ĕçченсене уйăхсерен шалу тӳлеме тытăннă.

1959 çулта Муркаш районне – Элĕк районĕпе, каярахпа Шупашкар районĕпе пĕрлештернĕ. Çакă хуçалăхсене аталанма чăрмав кӳнĕ.

«1961 çулта яла электричество çитрĕ. Хăма çурмалли станоксем лартрăмăр. Кĕркунне çĕр улми сутса грузовик тата трактор туянтăмăр. Хĕллехи вăхăтра колхозниксем Атăл леш енче вăрман касма тытăнчĕç. Йывăç турттарса хамăр патра выльăх витисем тума пуçларăмăр», – аса илет иртнине Алексей Петров.

Тăрăшса ĕçлени сая кайман: 1970-1972 çулсенче Мичурин ячĕллĕ хуçалăх гектартан 30 центнер тыр-пул, 250-300 центнер çĕр улми пухса кĕртнĕ. Аш-какай туса илессипе те, сĕт сăвассипе те районта малти вырăна тухнă.

Хуçалăх ертӳçинче вăл 23 çул ĕçленĕ. Хăйĕн тивĕçне яваплă пурнăçланă. Ахальтен мар тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ. Алексей Петрович – Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ. Унăн мăшăрĕ Римма Михайловна та пултаруллă, хастар. Вăл Красноармейски районĕнче çуралса ӳснĕ. Вăрнарти ял хуçалăх техникумне пĕтернĕ хыççăн Муркаш районĕнчи Шетмĕпуçĕнче выльăх тухтăрĕнче 43 çул вăй хунă. Ун чухне асфальт çул пулман. Çуркунне, юр кайнă вăхăтра, Римма Михайловна ялсене юлан утпа çӳренĕ. Хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх йышлă пулнă. Вĕсене сиплеме ветеринарсем вăрманта эмел курăкĕсем пухнă, типĕтнĕ, усă курнă.

Алексей Петровичпа Римма Михайловна пĕр хĕр çуратса ӳстернĕ. Вĕсен мăнукĕ, Алексей Ладыков, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ.

Хисеплĕ мăшăр ватлăха пăхмасăр халĕ те чăх-чĕп тытать, сурăх усрать. Алексей Петрович вара сакăр теçеткерен иртнĕ пулсан та общество ĕçне хастар хутшăнать.

**Илья ЯКОВЛЕВ. Муркаш районĕ.**

## СМСпа куçарма май пур

«Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕн пухмачне СМС ярса та пуянлатма пулать. «Ниме» тесе çырмалла та 4647 номерпе ямалла. Пĕр СМСшăн 55 тенкĕ те 30 пус илеççĕ. Хыпара темиçе хут та яма юрать.

## Çамрăк çемьесене – çурт-йĕр

Чăваш Ен федерацин 2011-2015 çулсем валли йышăннă «Çурт-йĕр» программăн «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çуртйĕрпе тивĕçтересси» çум программине хутшăнма конкурс суйлавĕ витĕр тухнă. Раççей субъекчĕсен хушшинчи ăмăртура çĕнтернĕ. Çавна май федераци хыснинчен пирĕн республикăна 126 млн тенкĕ укçа уйăрĕç. Унпа çамрăк çемьесем пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарĕç. Ку нухрат 600-700 çемьене çуртпа тивĕçтерме çитĕ.

## Умра – çырав

2016 çулта Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ иртет. Унăн тĕп тĕллевĕ – ял хуçалăх ĕç-хĕлне, унăн тупăшне, çĕрпе, техникăпа епле усă курнине, мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕх усранине, улмаçырла туса илнине тишкересси.

Çырав вицĕ тапхăртан тăрать: пĕрремĕшĕ – хатĕрленӳ вăхăчĕ, иккĕмĕшĕ – мероприятие ирттересси, виççĕмĕшĕ – материалсене йĕркелесе тивĕçлĕ вырăна ярса парасси. Хатĕрленӳ ĕçĕсене вăхăтра тата тĕплĕ пурнăçласан çеç çырава кирлĕ шайра ирттерме пулĕ.

## Салтак тивĕçĕнчен пăраннă

Тăван çĕр-шыва сыхласси – арçын тивĕçĕ. Шел, юлашки вăхăтра каччăсенчен хăшĕ-пĕри çакăн пирки манать. Салтак тивĕçĕнчен пăранакансем те пур. Акă Шăмăршă районĕнчи 23 çулти Василий Ширшлин тĕлĕшпе Патăрьел район сучĕ тивĕçлĕ приговор йышăннă.

2008 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче вăл Патăрьел тата Шăмăршă районĕсен çар комиссариатне медицина комиссийĕ тухма пынă. Çакăн хыççăн, хăйне çара кайма повестка парасран шикленсе-ши, çар комиссариачĕнчен тухса шăвăннă.

2012 çулхи авăн уйăхĕнче йĕкĕт вăхăтлăха республика тулашне ĕçлеме кайнă. Çавна май авăнăн 10-мĕшĕнче çара каймалли пирки ăна амăшĕ урлă аса илтернĕ. Каччă ку хутĕнче те шарт сикмен.

Çак çулхинех чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче ăна раштавăн 2-мĕшĕнче çар комиссариатне пымалли пирки повестка парса хăварнă. Анчах салтак тумне тăхăнма васкаманскер чĕннĕ çĕре каллех кайман.

Иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн 16-мĕшĕнче Комсомольскинчи вăхăтлăх изоляторта «канакан» Ширшлина черетлĕ повестка тыттарнă. Раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче çар комиссариатне пырасси çинчен алă пуссах шантарнă вăл. Хăй вара кайма та шухăшламан.

«Пĕрре улталатăн, тепре, виççĕмĕшĕнче ларса йĕретĕн» тенешкел каччăн суд тенкелĕ çине ларма тивнĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

**Хăвăртлăх. Хăрушсăрлăх. Хÿтлĕх**

◆ АСĂРХАН

# Васкакан инкеке лекет

Çуран çÿретпĕр-и е автомашинăпа – тaçта васкатпăр. Унта е кунта хăвăртрах çитес тесе умри тункатана та асăрхамастпăр. Пĕр-пĕр çĕре пырса тăрăнсан çеç "чавса çывăх та çыртма çук" текен каларăша аса илетпĕр. Васкани вилĕм патне илсе çитерсен хурланса макăратпăр, кулянатпăр. Çын инкекĕ чуна витермелле, ăс памалла, асăрханулăх çинчен аса илтермелле. Хальлĕхе ун пек йăлана хăнăхаймастпăр. Чукун çул урлă каçнă чухне çав-çавах тимсĕр, йĕркене пăхăнмастпăр, транспорта ÿсĕрле тытса пыратпăр. Çакна пула чукун çул урлă каçмалли вырăнсенче пĕлтĕр виçĕ инкек пулнине вулакансене пĕлтернĕччĕ. Кăçал виçĕ уйăхри кăтартусене пĕтĕмлетме вăхăт çитмен темелле – кулянтаракан тĕслĕхсем пур та.



Кăрлач уйăхĕнче çăмăл автомашина Ишлей – Шупашкар чукун çул каçмине пуйăс çывхарнă вăхăтра пырса кĕнĕ, çутă тата сасă сигналĕсем ĕçленине те пăхман. Юрать хăрушă инкекрен çăлăнса юлнă.

Кун пирки нумаях пулмасть Шупашкарта иртнĕ пухура Чул хула чукун çулĕн тытăмĕнче ĕçлекен Александр Черемнов аса илнĕ. Калаçăва Çул çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕн управленийĕн республикăри пуçлăхĕн çумĕ Олег Федоров, Чăваш Республикинчи Транспорт министрĕн çумĕ Михаил Степанов хутшăннă.

Чукун çул урлă йĕркене уямасăр каçакан водитель айăплĕпе автомашинăри çынсемсĕр пуçне пуйăс çинче ларса пыракансем те инкеке лекме пултараççĕ. Мĕн кăна турттармаççĕ пулĕ чукун çулпа, çав шутра – сиенлĕ, хăрушлăх кăларса тăратакан япаласем те. Пĕр-пĕр тимсĕр водительшĕн вĕсем юхса тухсан, сирпĕнсен çĕр-çĕр çын хур курĕ.

Çул çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕн тытăмĕнче ĕçлекен пĕлтерне тăрăх – кăçалхи икĕ уйăхрах 205 водитель йĕркене пăснă. Пĕлтĕрхи тапхăрта 145 тĕслĕх пулнă. Чукун çул урлă йĕркене пăсса каçсан водитель правине туртса илме е 5000 тенкĕлĕх штраф тÿлеттерме пултарнине аса илтернĕ явапла çын.

Инкексен шутне чакарас тĕлĕшпе Чул хула чукун çул управленийĕ те çул-йĕр инспекторĕсемпе нумай ĕçлет, предприятисенче тĕл пулусем йĕркелет. Каçмасене ятарлă программăпа тĕпрен çĕнетет: вĕсем патне илсе çитерекен çула асфальт сарать, хатĕр-хĕтĕр вырнаçтарать, çывăхри территорие юсать тата ытти те. Пĕлтĕр республикăра 9 каçма патне пымалли çула асфальт сарнă. Кăçал 8 каçма çумĕнчине çĕнетмелле.

Сайра усă куракан тата ыйтнине тивĕçтермен каçмасене хупма тăрăшнă. Иртнĕ çултанпа "Канаш-Энĕшпуç станцийĕ" пĕрешкери каçма ĕçлемест. Кăçал иккĕ хупăнмалла.

Республикăри Транспорт министерстви те "Раççей чукун çулĕсем" пĕрлешÿпе тачă çыхăнса ĕçлессине палăртнă. Кăçал пĕрлехи проектпа "Шупашкар – Çĕнĕ Шупашкар" çулăн 2-мĕш çухрăмĕнчи каçма çинче видеохатĕр вырнаçтарасшăн. Чукун çул управленийĕ электроçыхăнăва йĕркелет, министерство хăй енчен ятарлă хатĕр туянса вырнаçтарать.

Шупашкарăн "хĕвел анăç хапхине", 15 çухрăмри каçмана, 2015 çулта модернизаци программине кĕртессе те шанаççĕ чăвашсем. Уйăхсерен ун урлă 30 пин автомашина каçать. Çавăнпа ăна тĕпрен çĕнетме кирли куç кĕрет.

## Тăванран ыйтман

Шупашкарти Кăкшăм урамĕнче хурал тăнă каç патруль ушкăнĕ йĕкĕтсене асăрханă. Лешсем улттăмĕш моделлĕ "Жигули" машинăна ĕхлете-ĕхлете тĕкнĕ. Йĕрке хуралçисем çăмăл машина документĕсене кăтартма ыйтнă. "Килте хăварнă-мĕн" вĕсене çамрăксем. Хурав иккĕлентернĕрен вĕсене полицин 3-мĕш номерлĕ уйрăмне илсе çитернĕ. Часах унта 20 çулти водитель машина çухални пирки пĕлтернĕ. Ăна Эгер бульварĕнчи картишрен хăваласа кайнине каланă. Хире-хирĕç тăратсан машина хуçи çамрăксем хушшинче тăванне палласа илнĕ. Ăна вăл машинăпа çÿреме ирĕк паман, çавăнпа ку тĕслĕхпе уголовлă ĕç пуçарнă.

## Тĕрĕсленĕ те суда панă

Шупашкарти Ленин район судне Етĕрне прокуратуринчен тавăç хучĕ çитнĕ. Унта "Чул хула – Ĕпхÿ автомобиль магистралĕн управленийĕ" çула çутăпа тивĕçтерес тĕлĕшпе япăх ĕçленипе (тĕрĕсрех, ĕçлеменшĕн) кăмăлсăррине палăртнă. Çул çинчи инкек сăлтавĕ – çутăпа тĕрĕс мар тивĕçтерни е вăл пач пулманни. Çакна нормăсемпе стандартсенче çирĕплетнĕ. М-7 федераллă автоçулăн Етĕрне районĕпе иртекен сыпăка тĕрĕслесен прокуратура унта çутă çитменнине палăртнă. Çул урлă хывнă кĕпер айĕнче 34 метр таран çутă пулман. Çакă çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерменнипе саккуна пăхăнманнипе танах.



◆ ĂСА ИЛ

# Вĕрентекенсем – инспекторсем

Машинăсен ĕмĕрĕнче çул çÿрес йĕркене мĕн пĕчĕкрен вĕрентмесен инкек хыçран хăвалĕ. Ку тĕлĕшпе шкулсенче ятарлă предмет çук, анчах хушăран урок ирттерме май тупма пулатех. Хăнăхнă вĕрентекене çул çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕнче ĕçлекенсем улăштарни ачасемшĕн пушшех кăсăклă.

Светофор çук çĕрте çул урлă мĕнле каçмалла? Хăш вырăнсенче водитель çуран çÿрекене асăрхамасан та пултарать? Çак тата ытти ыйту тавра Шупашкарти шкулсенче вĕренекенсемпе çул-йĕр инспекцийĕн хулари пайĕнче тăрăшакансем калаçнă.

Çак тапхăрта "Ачасем" ятпа рейд иртет. Çуркуннехи каникулта нумайăшĕ вăхăта урамра, спорт площадкисенче ирттерет. Тепĕр чухне аслисен вĕсемпе пĕрле пулма вăхăт çук. Шăпах каникулта ачасем инкеке лекнĕ тĕслĕхсем йышланаççĕ. Çавăнпа çул-йĕр инспекторĕсен урокĕсем пит вырăнлă пулнă.

◆ ТИМСĔРЛĔХ, ÇĂМĂЛТТАЙЛĂХ

## Пăраннă та çаврăнса ÿкнĕ

Тăвай район çыннин пурнăçĕ Канаш хулинче татăлнă. Пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче çур çĕр иртни виçĕ сехетре хулари Красноармейски урамĕпе пынă чухне "ВАЗ-21093" водителĕ çул айккине пăрăнса тухнă. Çакăн хыççăн машина çаврăнса ÿкнĕ. 26 çулти водитель васкавлă медицина пулăшăвне кĕтсе илеймесĕрех куçне хупнă.

## Тăвата çул – ирĕклĕхсĕр

Улатăрта пурăнакан 27 çулти арçын машинипе, ахăртнех, çил хăваласшăн пулнă. Хăвăртлăха сехетре 140 километр таран ÿстернĕ (ку ĕç нарăс уйăхĕнче пулнă). Пăрачкав районĕнчи Кудеиха ялĕ çывăхĕнче хирĕç килекен çулпа "Волга" машина çывхарнине курнă пулин те хăвăртлăха чакарман. Çакна пула ăна пырса тăрăннă. Çăмăл автомашина водителĕ, юнашар ларса пынă шăллĕ тăна кĕреймесĕрех пурнăçран уйрăлнă. Инкек кăтартнă машинăри хĕрарăм та йывăр аманнă.

Машинине çил пек хăваланă водитель айăпне йышăнман. Анчах следстви унăн сăлтавĕ вырăнсăррине ĕнентерме пултарнă. Улатăрта пурăнакан çул çÿремелли йĕркене пăхăнманнине, çавна пула икĕ çын вилнине, пĕр çын суранланнине суд та йышăннă. Халĕ унăн тăватă çул колони-поселенире ирттерме тивĕ. Унсăр пуçне вилнĕ çынсен тăванĕсене 1100 000 тенкĕ тÿлемелле.

# Чи малтан хутшăнтăмăр

Раççейри патшалăх автоинспекцийĕ, "Хăрушсăр çÿрев" обществăлла организаци тата автомашинăсене страхлакансен пĕрлешĕвĕ пуçарнипе "Чарăнса тăр" ятпа кампани иртет. Пирĕн республика унта çĕр-шыври ытти тăрăхсенчен чи малтан хутшăнчĕ. Шкулсенче, ача сачĕсенче, аслă вĕренÿ заведенийĕсенче çак вăхăтра кунсерен пĕлтерĕшлĕ мероприяти иртет. Çул урлă каçмалли вырăнсенче, бензинпа тивĕçтерекен станцисенче, автошкулсенче те ятарлă акцисем йĕркелеççĕ. Пĕчĕккисене çул-йĕр правилисене вăйăсем выляса ăнлантараççĕ. Аслисемпе çивĕчреххĕн калаçаççĕ.

"Манăн шухăшăмпа, питех те кирлĕ проект. Паян хулари 4-мĕш гимназире пулнă май ачасем вăйăсене хавхаланса хутшăнни, ытларах пĕлме тăрăшни савăнтарчĕ. Çак акци (ака уйăхĕн 15-мĕшĕччен пырать) çул çинчи инкексен йышне чакарма пулăшмалла", – палăртнă Чăваш Республикинче ачасен правине хÿтĕлессипе ĕçлекен Вячеслав Рафинов.

## Пурнăçĕ татăлнă

37 çынпа тĕрлĕ техникăна явăçтарма тивнĕ Çĕрпÿ район территорийĕпе иртекен аслă çул çинче пулнă инкеке лекнисене çăлма. Машина алăкĕсене ятарлă инструментпа хирсе аран кăларнă вĕсене.

М-7 автотрассăн 671-мĕш çухрăмĕнче, "Хĕрлĕ ту" чарăну çывăхĕнче, виçĕ машина çапăннăран пулнă çак авари. Инкассатор машинине (вĕр çĕнĕ те Чул хула номерлĕскерĕн, Казахстана çитмелле пулнă) тытса пынă водитель хирĕç транспорт килекен çул çине вирхĕнсе тухнă та тепĕр "Газельпе" тата "Шевроле Лачети" машинăпа çапăннă. Ку машинăра Патăрьел çыннисем ларса пынă: 7 çын таран. Ашшĕ-амăшĕ ачисене алăра тытса пынă. Инкекре 36 çулти водитель, 65-ри хĕрарăм, икĕ çулти хĕр ачапа çулталăкри шăллĕ тÿрех вилнĕ. Вĕсен амăшĕ, 25 çултискер, больницăра тепĕр икĕ сехетрен ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Вăтăрти кил хуçи реанимаци уйрăмне лекнĕ.

Аварире çавăн пекех тепĕр машина водителĕ те аманнă.

Страницăна Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

Кăларăм Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе тухса тăрать.



# Çĕкленет, аталанать Кунер

Куславкка районĕнчи Кунер ял историйĕ пирки çакнашкал халап çӳрет. Кунер ятлă чăваш чăтлăх вăрмана касса кил-çурт çавăрнă. Вырăнĕ илемлĕ пулнăран ытти çынсем те кунталла туртăннă. Çапла вара ял пуçланса кайнă. Ăна çак арçын ятне панă.

1860 çулта ялта 30 хуçалăх пулнă. Вăл Владимир çулĕ çывăхĕнче – халĕ Мускавпа Хусан çулĕ – шавлă вырăнта вырнаçнă. Çул-йĕр юнашар пулни ял экономикипе общество аталанăвне ӳстерме пулăшать. Кунта таса çăл куçсем тапса тăраççĕ. Маларах Кунере юманлăх та илем кӳнĕ.

Халĕ ялта 162 кил. Вĕсенче 374 çын пурăнать. Çуртсене газпа ăшăтаççĕ, ял хушшинче – хытарнă çул.

Кунер ял тăрăхĕнче 7 суту-илӳ çурчĕ. Вырăнти информаципе культура центрĕ вара икĕ клуба, культура çуртне, 1 вулавăша пĕрлештерет.

Кунер хăйĕн пултаруллă çыннисемпе мухтанать. Вĕсен йышĕнче – авиаци полкĕн летчик-инструкторĕ Михаил Миронов, Тутар Республикин тава тивĕçлĕ машиностроителĕ Лев Иванов , техника наукисен докторĕ, Галина Новикова профессор, ЧАССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Анна Иванова, ЧАССР промышленноçăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Нина Трофимова.



Тĕп библиотекарь Светлана Матанова



Татьяна Трофимова



Информаципе культура центрĕн ертӳçи Борис Федоров



Зинаида Ильина



Надя Ильина



Гена Николаев



Аня Николаева



Дима Семенов



Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Юсов



Нина Родионова, Анна Львова, Елена Григорьева, Елена Быркина

*С. ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.*

# Ял сăн-сăпачĕ – куç умĕнче

Чупайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул çумĕнче тăван тавралăх музейĕ пур. Василий Цыфаркин вĕрентекен тăрăшнипе иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче йĕркеленĕ ăна. Халĕ вара музее Василий Егоровичăн мăшăрĕ Людмила Александровна ертсе пырать. Вăл асăннă шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет.

Ялти паллă çынсене, Афган тата Чечня вăрçин салтакĕсене, тăван шкула тата ял хуçалăхне халалласа ятарлă кĕтессем уйăрнă. Акă Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин паттăрĕ Никита Зарубин 100 çул тултарнине чаплăн уявланă Чупайсем. Эскадрилья штурманĕ, сывлăш стрелокĕсен службин пуçлăхĕ пулнăскер Ленинграда хӳтĕленĕ май вилнĕ. 15 çул тус-тăванĕ унăн шăпи çинчен нимĕн те пĕлмен. Ăна Ленинград облаçĕнчи «Назия» торф кăларакан предприяти ĕçченĕсем тупнă. Ентеше Хĕрлĕ Ялав, Ленин тата I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕсемпе чысланă.

Афган вăрçинче пуç хунă Александр Линга пирки те пуян стенд йĕркеленĕ. Ун ячĕпе çулсеренех районта чупу ирттереççĕ. Вăл çуралса ӳснĕ урама унăн ятне панă.

«Дружба» хуçалăх та хăй вăхăтĕнче аван ĕçленĕ. Пирвайхи председатель – Григорий Желтухин. Иван Григорьев вара хуçалăха 30 çул ытла ертсе пынă. Колхоз тăрăшнипех ялта ача сачĕ те тунă.

Музейра авалхи ĕç хатĕрĕсене, савăт-сапана, тумтире курма пулать. Ăна çулсерен çĕнетме тăрăшаççĕ. Ку ĕçе вĕренекенсене те явăçтараççĕ.

**Валентина МАКСИМОВА. Вăрмар районĕ.**



# Пирĕн сĕт Европăринчен хаклăрах

Сĕт рынокĕнчи паянхи лару-тăрăва ăнланас тесен юлашки çулсенче ял хуçалăхĕнче пулса иртнĕ улшăнусене тишкермелле пирĕн. 2008 çулти экономика кризисне пула асăннă отрасль самаях хавшарĕ: вылăх апачĕпе топливо хакĕсем сисĕнмеллех хăпарнине кура хресчен ĕне кĕтĕвĕн йышне чакарчĕ. Ун хыççăнах – 2010 çул, типĕ те шăрăх çу кунĕсем, улăх-çаранта сурăх чĕпĕтмелĕх çеç ÿснĕ курăк... Çавăнтанпа хуçалăхсем вăй илеймеççĕ, çĕнĕ сĕт комплексĕсене хута ярасси пирки çăвар та уçман. 2013 çулта Раççей 1,5 млн тонна сĕт илсе çитерейменĕ. Тавара халăх ыйтнинчен сахалрах туса кăлараççĕ пулсан ун хакĕ ÿсессе кĕтсех тăр. Иртнĕ çул раштав уйăхĕнче пĕр тонна чĕр тавара 18872 тенкĕпе сутрĕç. Европăри нихăш çĕр-шывра та çук кунашкал тĕслĕх.

Хаксен вылявĕ тепĕр самантпа çыхăннă. Ку вăл – уççи-хуппи çукки. Сĕт продукчĕсене ăçта тата мĕн чухлĕ туса илеççĕ, ĕне йышĕ еплерех, ферма уçма шантарнă фермерсенчен хăшĕ чăннипех ĕçлет? Ниçта та тĕп-тĕрĕс хурав илтеймĕн. Статистикăна ĕненме йывăр. Вырăнти влаç тытăмĕсем çÿле суя отчетсем ярса пани – ĕлĕкрен пыракан йăла. Сĕтпе ĕçлекенсен пĕрлĕхĕн ертÿçи Андрей Даниленко отрасльти уçăмсăрлăх ура хунине палăртрĕ. Тĕлли-паллисĕр ăшталанатпăр. Ал айĕнче тĕрĕс цифрăсем çук чухне фермăсене патшалăх енчен пулăшу памалли виçене палăртса хатĕрлеме çав тери йывăр. Пĕр гектар пусне тивекен пулăшупа эпир Анăçран чылай кайра пынине пĕлетĕр, пĕр ĕне пусне миçе тенкĕ тивĕçни çинчен асăнма кирлех-ши? Муклатса çÿрекене çук-çук тесе тавăрасси çеç юлать.

Юрĕ, тепĕр тесен мĕн панипе çырлахăпăр. Анчах укçан пысăк пайне (70 процент таранах) ĕне усракансем валли мар, инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртекенсен кредит процентчĕсене тÿлеме янине мĕнле ăнланмалла? Сĕт сăвакан патне 10 пусран виççĕшĕ çеç çитни ял çыннине питĕ тарăхтарать. Çавăнпа хуçалăх ертÿçисем тĕрĕсех калаççĕ, банк тытăмне тĕреклетмелли укçа вăл теççĕ.

Çÿлерех субсиди ыйтăвне хускатрăмăр. Тĕрĕсрех каласан, ĕне пусне мар, сăвăма кура уйăраççĕ ăна. Кам продукцие чи пысăк сортпа леçет – çавсем валли. Ăна илес тесен ыттисен малтисемпе танлашма ăнтăлмалла. Ку чухнехи меслетсене хута ярса продукци пахалăхне лайăхлатмалла пек. Каçарăр та, пур-çук укçине çур аки е вырма ирттерме тăкакланă предприяти çĕнĕ ферма тума епле вăй çитерĕ? Регионсен тупăшĕвĕнче хăш-пĕр облаçсем пĕтĕм чĕр тавара лайăх сорта кĕртни нумай ыйту çуратрĕ. Çĕнĕ комплекссем ĕçе кĕртмесĕрех продукци «пахалăхне» çÿллĕ шая çĕклеме пулать иккен. Кама улталаççĕ: патшалăха-и е сĕт-турăх туянакана-и?

Лавккара çăратнă сĕт, сыр е шоколад туяннă çын киле çитсен çисе пăхать те пусне ун-кун суллать – ĕлĕкрех çак çимĕçсен тути пачах урăхлаччĕ, халь мĕн хутăштараççĕ-ши? Тупсăмĕ ансат: ĕне сĕчĕ вырăнне ÿсен-тăран çăвĕпе ытларах усă кураççĕ. Чикĕ леш енчен кÿнĕ пальма сĕчĕ пирки сăмах пырать. Апат-çимĕç производствинче типĕ сĕт тÿпи çуллен ÿсни куç кĕрет. Влаçра ларакансем çав лару-тăрăва курмаççĕ-им?



Воронежра ирттернĕ анлă канашлура çапла ыйтнăччĕ РФ Правительствин пуçлăхĕнчен Медведевран. Паллах, премьер хресчен нушине сывăха илет, хÿтĕлеме хатĕр, шел пулин те, сĕт продукцийĕн техника регламентне никам та пăхăнмасть. Пĕр цифра кăна. Çуллен ютран 600 пин тонна пальма çăвĕ килет-мĕн. Раççейре пурăнакан кашни çын пусне 4 кг тивет! Пур кондитер изделийĕнче те пур вăл. Пирĕн чи юратнă çимĕçре – мороженăйра та. Ÿсен-тăран çăвĕпе усă курса хатĕрленĕ продукци хакĕ хамăр сĕтрен кăларнинчен пĕчĕкрех пулма тивĕç. РФ Тĕп санитари врачĕ çакна палăртсах каланăччĕ.

Раççейри ĕне кĕтĕвĕн йышне, унăн сĕт антарасăлăхне тĕп-тĕрĕс шутласа кăлармасăр малалла каяймăпăр. Инвестици кредичĕсемшĕн тÿлемелли процент ставкисемпе уçăмлăх кирлĕ. Сĕт отраслĕне 2020 çулчченхи тапхăрта аталантармалли программăна кăçалах хатĕрлеме хушнă. Çуллен 38 млн тонна сĕт туса илмелли майсем пур тенине ĕненес килет.

**Вера ЗЕЛИНСКАЯ.**

# Çĕнĕ тум çынна улăштараймĕ

**Социализм саманинче пурнăçланма май çук проектсемпе халăха пăтратрĕç, халĕ тĕрлĕ реформа туса чуна илеççĕ. ЖКХ реформи мĕне тăрать. Çирĕм çул ытла çĕнететпĕр ăна, чылайăшĕн ĕмĕрĕ Хрущевпа Сталин баракĕсенчех иртет, пирĕн çурт картишне тирпейлекен арçын вырăнне çĕнĕ хĕр упраç килнĕ, çав шăпăрпах пуçтарать çÿп-çапа... Е тата патша вырăнне Дмитрий Медведев юрист ларсанах, вăл пуçарнипех ĕнтĕ, право йĕркине сыхлакан тытăмра реформа ирттерме пикенчĕç. Милици чысне варалакансенчен тасални паха, икĕ питлисем ан пулччăр пирĕн хушăра. Шел, «полици» сăмах темшĕн ют пирĕн çынсемшĕн, шалта темĕнле урăхла пĕлтерĕшпе çÿренĕн туйăнать. Йĕрке хуралçисене çĕнĕ тум çĕлесе панипе,шалăва кăштах ÿстернипе, вĕсен пуçлăхĕсене улăштарнипе Шалти ĕçсен министерствинче реформа вĕçленчĕ пулас. Мĕнле пулнă – çаплипех юлнă. Пурнăçран илнĕ тĕслĕхсем çавна çирĕплетеççĕ.**

### Кĕтмен тĕл пулу

Район центрĕнчи пасарта пĕрле вĕреннĕ юлташпа тĕл пултăм. Çĕр çул курман Федьăна. Ялти пĕр шкулта физкультура учителĕнче ĕçленине, каярахпа ăна наркотик сутнăшăн кирпĕч шутлама ăсатнине ас тăватăп. Хăй яту тумланнă, çÿçне кĕл тĕсĕ çапнă, кулнă чухне ылтăн шăлĕсемпе тыткăнлать. Пасар патĕнчех унăн иномарка ларатьмĕн, яла леçсе яма пулчĕ.

– Мĕнле пурăнатăн, мĕн çĕмĕрттеретĕн? – тĕпчетĕп эпĕ.

– Эпĕ чикан майрине качча илнине пĕлместĕн-им? Пурнăçран юлнă эсĕ, тăванăм. Чăннипе каласан, унчченхи бизнеса таврăнтăм эпĕ.

– Чим-ха, Федя, колони сана ниме те вĕрентмерĕ-и, хăрамастăн-и?

– Тĕрмерен ăсланса таврăнатăн. Ухмах пулнă ун чухне, ăна-кăна тĕшмĕртнĕ пулсан сакăр çуллăха хупмĕччĕç.

– Тем, ăнлансах çитерейместĕп-ха...

– Кама укçа тĕкмеллине ăнкарайман. Вырăнти уйрăмри капитан е майор пĕрре-иккĕ çăлса хăварĕ, наркотан пысăк виçипе лексен вара...

– Пысăк çăлтăрлă куккасем çеç çăлса хăварĕç.

– Вăт, кăна тĕрĕс каларăн, пуçу ĕçлет сан. Пире ăс панă Нина Сергеевна вĕрентекен тăрăшни сая кайман. Ылтăн пакунлисем пурте тупăшлă бизнесра, вĕсене пырса тĕкĕнеймĕн. Саккунсене хăйсем çыраççĕ, кама тĕрмене ăсатмаллине те вĕсем тĕллесе кăтартаççĕ. Эпир камсем? Вĕсен шавкă йыттисем. Ятне туса темиçе грамм гашиш упракана хупса хураççĕ, хăйсен кĕсйине укçи мĕлиюнĕпе кĕрет. Мулне ниçта чикейменнипе леш тĕнчене пĕрле илсе каяççĕ-ши?

– «Шурă вилĕме» çамрăксем хушшинче саратăн, шкул ачисем те çав серепене лекеççĕ. Совеçÿ пур-и сан?

– Эс ман совеçе ан кăтăкла. Эпĕ ăна тĕрмери читлĕхре хăвартăм. Тĕрлĕ тÿре-шара, полковниксемпе генералсем чаплă керменсене кам укçипе хăпартаççĕ? Вĕсен совеçĕ вăраннă-и?

– Пурне те пĕр карта лартас марччĕ. Служба чысĕ çинчен манманнисем пурах. Эс хăв çак танатаран тухма шутламан-и?

– Эрешмен картине кĕме çăмăл та тухма хĕн. Сана тасçта та шыраса тупаççĕ. Пур çĕрте те хăйсен çыннисем. Вил тăприне те чавса кăларĕç, унта та мафи хуçаланать. Укçапа пур ыйтăва та татса параççĕ пирĕн çĕршывра.

### Ĕнерхи прокурор

Курган облаçĕнчи «упа шăтăкĕнче» вырнаçнă ялта тахçан прокуратурăра ĕçленĕ ватăна тирпейлесе пытарчĕç. Юлашки çула ăсатма Мускаври тăванĕсемсĕр пуçне никамах та килмен. Ĕçтешĕсем те курăнмарĕç. Тĕп хулари район прокуратурине ертсе пынăскерпе сыв пуллашма килменни шухăша ячĕ. Хăй вăхăтĕнче служба картлашкипе хăпарас тесе ăна пăхăнакансем йăпăлтатса пурăннă пульха, вилсен кама кирлĕ эпир?

Мускав пенсионерĕ, чаплă юрист, юлашки кунĕсене тăван ялта ирттерчĕ. Ял çине сăмах тухнăччĕ. Иван Карлович (çапла чĕнетчĕç ăна), служба тивĕçне нимрен мала хунăскер, пĕр чăрмавлă ĕçе вĕçне çитерессишĕн канăçа çухатнă. Патшалăха пысăк сиен кÿнĕ, темиçе миллиардпа пуйнă çынсене тупса палăртнă вăл.

Тĕкĕнме юраман пуçлăхсен пахчине кĕни хакла ларнă. Кремль хушнипе следстви ĕçне чарнă, прокурора – отставкăна. Çав кисретÿ хыççăн самаях халсăрланнă Иван Карлович Мускаври хваттерне хĕрне халлаcа хăварнă та тĕп хулари влаç хÿрешкисене куç ан куртăр тесе яла таплаттарнă.

Ял хула мар. Кунта кашни çын сăнсăпачĕ çатма çинчи пек. Пĕрне сăлтавсăр айăпласа тĕрмене хупасшăн, теприне тăван килĕнчен ачисем хăваласа кăларса янă та хута кĕрекен çук. Таврара ăста юрист тупăймăн, хула ваккачĕсем çич хут тире сĕвеççĕ. Пĕр сăмахпа – аптриш.

Ĕмĕрĕпе тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнĕ Иван Карлович тÿссе ларайман, мĕскĕнсене пулăшас тенĕ: кирлĕ çĕре хут шăрçаласа парать, хăй çитсе килет. Пенси укçипе тытăнкаласа пурăнакансем тав туса пулăштух çĕклесе килеççĕ. Пĕри хăналать, тепри... Ун патне таврари ялсем те тăтăшах çÿретчĕç. Нихăçан та çуттипе туслă пулман ватăна çав пĕтерчĕ пуль. Çынсем ыр туса ĕçтерни инкеке çывхартрĕ-тĕр.

Мĕнешкел ырă чунлă çынччĕ тесе тăхăр кунне асăнчĕç те пуçланчĕ хайхи урмăш калаçу: «Пирĕн полици йăлтах сутăннă, пуçлăхĕ хăйне тĕнче кăвапи пек тыткалать, унăн сăмахĕнчен иртеймĕн. Иван Карлович тăр пĕччен кĕрешсе пуçне çирĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр, япăхпа ан аса илтĕр пире...»

**Александр ДЕДОВ.**



Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.

**Ял хӗрарӑмӗ**

# Хутаҫ ҫӗленипех ҫырлахмаҫҫӗ



Ача-пӑчана кӑсӑклантарма пӗлетех вӑл. Е аллине тӗрӗ тытать – ҫӗвви шӑрҫа пек пулать, е ҫӗвӗ машини умне ларать – кирлӗ япала ҫӗлет. Вӗрентекенӗн ӗҫ стажӗ – 18 ҫул. Светлана Голубева паян Аслӑ Елчӗкри вӑтам шкулта ӗҫлет, ачасене технологи предметне вӗрентет. Урӑхла каласан, ӗҫлеме хӑнӑхтарать. Ал ӗҫне пӗчӗкренех кӑмӑлланӑран вӑл ҫак професие суйласа илнӗ. «Шкулта вӗреннӗ вӑхӑтра ӗҫ урокӗсене Галина Деомидова ертсе пыратчӗ, – аса илет иртнине Светлана Васильевна. – Кашни урокра тӗрлӗ ӗҫ пурнӑҫлаттӑмӑр: тӗрлеттӗмӗр, чӗнтӗр е алсачӑлха ҫыхаттӑмӑр, ҫӗлеттӗмӗр. Унсӑр пуҫне унӑн ятарлӑ кружок пурччӗ. Эпӗ унта та ҫӳреттӗм».

Елчӗк районӗнчи Аслӑ Пӑла Тимешӗнче ҫуралса ӳснӗскер вӑтам шкул хыҫҫӑн Кироври технологи техникумӗнче пӗлӳ илнӗ. Каярахпа ҫак районти Кушкӑ шкулӗнче 17 ҫул вӑй хунӑ, хӗр ачасене ал ӗҫне хӑнӑхтарнӑ. «Ултӑ ҫул ачасем Раҫҫей шайӗнчи олимпиадӑсенче малти вырӑнсене йышӑнчӗҫ. Ҫакнашкал ӑмӑртусене пысӑк ӗҫпе хутшӑнмалла. Хутаҫ ҫӗленипе ҫеҫ ӗҫ тухмасть», – тет вӑл.

Технологи урокӗ эрнере пӗр сехет ҫеҫ пулни пӑшӑрхантарать вӗрентекене. Ачасене уйӑрнӑ сехетпе ҫеҫ ӗҫлеме хӑнӑхтараймӑн. Унсӑр пуҫне ку предмета 5-8 классенче ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ. Олимпиада е конкурса вара аслӑ классен хутшӑнмалла. Ҫавӑнпа та вӗсемпе уйрӑммӑн ӗҫлемеллине палӑртрӗ вӑл.

Технологи эрнере пӗрре ҫеҫ иртет пулсан та вӗренӳ ҫулӗнче тӗрлӗ ӗҫ пурнӑҫлама ӗлкӗреҫҫӗ ачасем. Акӑ нумаях пулмасть вӗсем кил-ҫурта сыхлакан пуканесем ӑсталанӑ. «Вӗсене кӑмӑл-туйӑмпа пурнӑҫламалла. Ахальтен мар авалтан амӑшӗсем пуканесене хӗрӗсене парнеленӗ, упрама сӗннӗ», – пӗлтерет вӗрентекен.

Светлана Голубева аслӑ пӗлӳ илес тӗллевпе халӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче кусӑн мар майпа ӑс пухать. Унсӑр пуҫне Елчӗкри историпе тӑван тавралӑх музейӗнче экскурсоводра ӗҫлет. Пултарулӑхне аталантарма кунта та май тупать вӑл. Пушӑ вӑхӑт пулсанах аллине йӗппе ҫип тытать. Палӑртнӑ кун вара Аслӑ Елчӗке шкула васкать. Унта ӑна ачасем чӑтӑмсӑррӑн кӗтеҫҫӗ.

# Арҫын ҫеҫ айӑплӑ-ши?

Пӗр ҫулхине «Хресчен сасси» хаҫатра манӑн материала пичетлерӗҫ. Эпӗ ӑна мӑшӑр тупас тӗллевпе ҫырнӑччӗ. Ун чухне ҫырусен йӗрӗпе ӑҫта кӑна пулмарӑм-ши? Республикӑна урлӑ-пирлӗ «ҫавӑртӑм». Нихҫан пулман ял тӑрӑхӗсене ҫитсе куртӑм.

Чылай чухне хӗрарӑмсем йывӑр пурнӑҫшӑн арҫынсене айӑплама пӑхаҫҫӗ. Ҫырӑвӗсене еплерех ҫыраҫҫӗ тата! Вуланӑ хыҫҫӑн ҫунат сарса вӗҫсем патне вӗҫес килет. Сӑмахӗсем чун-чӗрене ӑшӑтаҫҫӗ, кӑмӑл-туйӑма тыткӑнлаҫҫӗ. Савӑннипе ура хуҫса ташша ярӑн. Шел те, чӑн пурнӑҫра пачах урӑхла.

Вӗсем вокзалсенче тӗл пулма сӗнетчӗҫ. Эпӗ вара урӑхла мелпе усӑ курма шут тытрӑм: ҫыру авторӗсем патне хам кайса курас терӗм. Пӗр киле ҫитрӗм: унта чӑн-чӑн туй кӗрлет тейӗн. Хӗрсех ӗҫкӗ-ҫикӗ ырать. Ҫырури «сӑпайлӑ та ӗҫчен» хӗрарӑмӑн пичӗ-куҫӗ тӑртаннӑ, ури ҫинче аран тӑрать. Теприн вара килӗ-ҫурчӗ йӗркесӗр. Алӑк уратинчен иртмесӗрех каялла тухса тарас килчӗ. Эпӗ арҫын пулсан та эрнере икӗ хутчен урай ҫӑватӑп. Кун пек ҫуртра мӗнле пурӑнаҫҫӗ? Пӗлместӗп.

Каҫ пулса килнӗрен виҫҫӗмӗш ҫыру авторӗ патӗнче ҫӗр выртма тӳр килчӗ. Ирхине кӗсьерен укҫа ҫухалнине асӑрхарӑм. Юрать ытларах пайне урӑх ҫӗре чикме ӑс ҫитернӗ. Унсӑрӑн нимсӗр юлаттӑм.

Ултавпа инҫе каяймӑн. Вӑл пур пӗрех вӑхӑт иртнӗҫемӗн ҫиеле тухать. Хӗрарӑмсен мӗнле сӑлтава пула ӗҫкӗ ӑшне путмалла-ха? Малашлӑха та курмаҫҫӗ вӗсем. Ҫавнашкал ҫынсене хӗрхенес, пулӑшас килет. Анчах хӑйсем ҫине тӑмасан никам та пулӑшу кӳрес ҫук вӗсене.

Атте-анне ватӑлнӑран манӑн та хӑй вӑхӑтӗнче хуларан яла таврӑнма тиврӗ. Килӗштернӗ хӗр те пурччӗ, мӑшӑрланма та тӗв тунӑччӗ. Атте-анне хирӗҫ пулчӗ. Ун чухне вӗсен сӑмахне ӑша хывман пулсан, тен, паян кунченех ача-пӑча ӳстерсе, мӑшӑрпа килӗштерсе пурӑнаттӑмӑрччӗ.

Пӗччен пурнӑҫ кансӗр пулнине пурте ӑнланаҫҫӗ. Ял-йыш ҫинче ҫеҫ мар, тӑвансем хушшинче те палӑрать ҫак хутшӑну. Хисеп те ҫукрах. Пӗччен ҫыннӑн ӗҫ те калкал пымасть. Ҫапах та кӳршӗ пулӑшасса кӗтмелле мар. Халӗ самани те урӑхларах. Унччен пысӑк ӗҫсене ял-йышпа пурнӑҫланӑ, халӗ вак-тӗвек ӗҫе тума та пуҫ ҫапмалла, укҫа тӳлемелле. Унсӑрӑн ют ҫын мар, тӑвану та ҫурӑмпа ҫаврӑнса тӑрать.

Пӗр-пиринчен ютшӑнтӑмӑр, тӑвансемпе хутшӑнусем татӑлчӗҫ. Туйра е виле ҫинче ҫеҫ тӗл пулса сӑмахлатпӑр. Ҫемьере те тирӗк-чашӑк шӑкӑртатмасӑр пулмасть. Хӑш чухне алӑ вӑйӗпе усӑ куракан та пур. Ытларах чухне укҫа-тенкӗ ҫитменрен ҫемьере «вӑрҫӑ» тухать. Паллах, нухрачӗ те кирлӗ пурнӑҫра. Ҫавӑнпах ӗнтӗ ҫамрӑксем тӑван тӑрӑхран аяккарах ӗҫлеме ҫӳреҫҫӗ. Халӗ пурне те укҫапа виҫеҫҫӗ: пурнӑҫа та, юратӑва та. Ӗлӗкрех ҫамрӑксем пӗр-пӗрне савса пӗрлешнӗ пулсан, халӗ юрату тупраран пуҫланать. Асатте-асаннесем тулӑх пурӑнмасан та ҫичӗ-сакӑр ача ҫуратса ӳстернӗ. Килти «ҫӳп-ҫапа» урама кӑларман, ҫемье чӑмӑрне салатман. Ачисене ырӑ тӗслӗх пама тӑрӑшнӑ. Халӗ чылай чухне хӗрарӑмсем ҫемье арканнӑшӑн арҫынна айӑплаҫҫӗ. Сӑлтавӗ хӑйсенче мар-ши?

Пурнӑҫ сулӗпе манӑн сӑпайлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ хӗрарӑмпа юнашар утас килет. Ҫакнашкаллисене ҫыхӑну тытма сӗнетӗп.

Эпӗ хитре сӑн-питлисене шырамастӑп. Чунӗпе таса та тулӑх пултӑр, ҫынна хаклама пӗлтӗр.

Хам пирки. Чаплӑ керменпе машина ҫук манӑн. Кил-ҫурт ыттисенни евӗрех. Тунмастӑп, пысӑк уявсенче е хӑна-вӗрле пуҫтарӑнсан кӑштах ӗҫкелетӗп. Сӑлтавсӑр черкке енне туртӑнмастӑп. Чӗлӗм таврашне вара ҫӑвара хыпман. Укҫа тӳлесе сывлӑха хавшатма кирлӗ мар. Ӗҫрен хӑрамастӑп. Хӗрарӑмӑн-и вӑл е арҫыннӑн – пурне те пурнӑҫлатӑп. Виҫерен тухса ӗҫекен хӗрарӑмсене чӑрмантарма ыйтмастӑп. Мӗншӗн тесен ун пек пулӑмпа тӗл пултӑм маларах. Питӗме хӗретме тиврӗ.

Хаҫатра пӗлтерӳ пичетленсен ҫырусем килме пуҫларӗҫ. Пӗринпе ҫывӑхрах паллашма тӗв турӑм. Пӗр хушӑ пӗр-пӗрин патне ҫыру ҫӳретнӗ хыҫҫӑн тӗл пулса калаҫма шут тытрӑмӑр. Килӗштертӗмӗр пулас, часах пӗрле пурӑнма тытӑнтӑмӑр. Малтанхи уйӑхсем юмахри евӗр иртрӗҫ. Ҫакӑн пек хӗрарӑм тӗлне пулнишӗн шӑпама тав тӑваттӑм. Анчах иртерех хӑпартланнӑ иккен. Вӑл час-часах хаяр шӗвек сыпма пуҫларӗ. Малтанах шарламарӑм. Кӳршӗсемпе ӗҫнӗ пулӗ терӗм. Мӑшӑрӑм вара ӗҫ патне пыми пулчӗ. Ирхине тухса каятчӗ те каҫ енне ҫеҫ таврӑнатчӗ.

Пӗррехинче кил картине тирпейленӗ май пӳрте часах кӗреймерӗм. Каҫ енне ҫеҫ пушантӑм. Кӗтӗм – мӑшӑрӑм ҫук. Тӗп сакай алӑкӗ уҫӑ. Ҫӗр улми илме кӗнӗ пулӗ терӗм. Анчах темӗн чухлӗ кӗтсен те тухмарӗ. Кӗрсе пӑхрӑм. Мӑшӑрӑм витрене ҫӗр улми тултарса ывӑннӑ пулас, тӳнсе кайнӑ та ыйха ҫапать. Юнашар – четвӗрт кӗленчи. Ӑна тӗппипех пушатма ӗлкӗреймен хӑй.

Ҫулталӑка яхӑн тӗрмешсе пурӑннӑ хыҫҫӑн унпа сыв пуллашма тиврӗ. Каярахпа вӑл хӗл кунӗнче урамра шӑнса вилни ҫинчен илтрӗм. Манпа йӗркеллӗ пурӑннӑ тӑк ҫак инкек пулмастчӗ.

Туслӑха хаклакан, сывӑ пурнӑҫ йӗркипе пурӑнакан хӗрарӑмсене кӑна ҫыру ҫырма ыйтатӑп. Йывӑр вӑхӑтра пӗр-пӗриншӗн шанчӑклӑ тӗрев пуласса шанас килет.

**Валерий ПУШКИН.**
**Йӗпреҫ районӗ, Хирти Выҫли ялӗ.**

## УСӐЛЛӐ КАНАШСЕМ

- Капрон чӑлхана чикнӗ пуҫлӑ сухан сакӑр уйӑх таранччен лайӑх упранать.
- Ешӗл сухана сивӗтмӗшре пластик савӑтра упрасан аван.
- Ҫӗр улмипе сухана пӗрле тытма юрамасть, сухан часах ҫӗрет.
- Ҫӗрӗшнӗ пан улми ыттисене те чир ертет.
- Каснӑ сыра типесрен услам ҫупа сӗрмелле.
- Апат-ҫимӗҫе сивӗтмӗшре пластик савӑтра тытиччен кӗленче банкӑра упрани усӑллӑрах.
- Помидора полиэтилен хутаҫра тытма юрамасть – ҫӗрет. Симӗс помидор хӗрелтӗр тесен ӑна хутпа чӗркесе сивӗтмӗше хумалла.
- Имӗрне шӑнтмӑшра упрасан аванрах.
- Ӑшаланӑ мӑйӑр тути вӑраха пырӗ.
- Кӑмпана полиэтилен хутаҫа хуриччен хутран хатӗрленинче тытмалла.

**Кӑларӑма Валентина ПЕТРОВА хатӗрленӗ.**

## ЧӐВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВӖН ЭРНЕЛӖХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, пуш уйӑхӗн 31-мӗшӗ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЫЛТӐН ҪӲПҪЕРЕН» (6+)
19.00 «ТУСЛӐХ ЙЫВӐҪӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «БУМЕРАНГ» (12+)

**Ытлари кун, ака уйӑхӗн 1-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
19.00 «ҪӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Юн кун, ака уйӑхӗн 2-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
19.00 «ҪИТМӖЛ ТЕ ҪИЧЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кӗҫнерни кун, ака уйӑхӗн 3-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)

**Эрне кун, ака уйӑхӗн 4-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКӖСЕМ» (0+)
19.00 «ФИЛИПП ЛУКИН ҪУРАЛНӐРАНПА 100 ҪУЛ ҪИТНӖ МАЙ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Шӑмат кун, ака уйӑхӗн 5-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
9.30 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
10.00 «ЮРАТУПА КӐВАКАРЧӐНСЕМ». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
19.00 «ҪӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
19.30 «ҪАПЛА ПУЛТӐР» (12+)
20.30 «КАҪХИ ТӖЛ ПУЛУ» (12+)

**Вырсарни кун, ака уйӑхӗн 6-мӗшӗ**
9.00 «ЯШ ЧУХ, ҪАМРӐК ЧУХ» (12+)
9.30 «ТУСЛӐХ ЙЫВӐҪӖ» (12+)
10.00 «РАСПИСАНИРЕ ҪУК ПУЙӐС». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
15.00 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «НАОБУМ» (12+)
18.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
18.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «ПИРӖН ПУРНӐҪ ХӐТЛӐХРА» П. ОСИПОВ. ДРАМА (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Пуш, 26 – юн кун | Пуш, 27 – кĕçнерни кун | Пуш, 28 – эрне кун | Пуш, 29 – шăмат кун | Пуш, 30 – вырсарни кун | Пуш, 31 – тунти кун | Ака, 1 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.38 | 6.35 | 6.32 | 6.30 | 6.27 | 6.24 | 6.22 |
| | анать | 19.16 | 19.19 | 19.21 | 19.23 | 19.25 | 19.27 | 19.29 |
| Кун тăршшĕ | | 12.38 | 12.44 | 12.49 | 12.53 | 12.58 | 13.03 | 13.07 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (22.44) | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче |

ЯТ-СУМ

# Çунатлă сăмахпа çунатланса



**Литература каçалăкĕ умне тăрасси никамшăн та çăмăл пулман, пурте ун патне утăм хыççăн утăм туса хуллен тапаланаççĕ. Йывăр çул, тумхахлă. Пĕрмаях хута хуратмалла, çырмалла та çырмалла. Чĕлхе такăнни те тинке кăларать. Ăна пĕр вĕçĕм чутламалла.**

### Ачалăх сăпки

Роман Андреевич Чепунов литература каçалăкĕ умне тăмашкăн вăрахчен сăлпăранлă çулпа утнă. Тăхăрьял тăрăхĕнче, Тутарстанри Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче, 1934 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă вăл. Ытарайми илемлĕ, вĕтĕ-вĕтĕ хумлă Сĕве хĕррипе сарăлса выртакан тĕрлĕ чечекпе витĕннĕ улăх-çаранлă, кайăксен хитре сассипе тулса ларнă хутăш вăрманлă, пĕр çырма-çатрасăр, куç тулли уйхирлĕ пуян тавралăхра çитĕннĕ. Ашшĕ-амăшĕпе, аппăшĕсемпе пĕрле колхозри пур ĕçе те хутшăннă: ака-суха тунă, çурлапа тырă вырнă, çитĕннисемпе юнашар тăрса утă çулнă, вăкăрпа тырă турттарнă, вăрман каснă. Сĕвере шыва кĕнĕ, пулă тытнă, вăрманта çырла-кăмпа, мăйăр татнă. Çамка çине мăкăльсем лартнă, алă-урана хăмпăсем кăларнă.

1954 çулта Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев уçнă чăваш шкулне — педагогика училищине — вĕренме кĕрет.

### Яковлев шкулĕ

– Çу вĕçĕ. Çурла уйăхĕн юлашки эрнисем, — аса илет халĕ Роман Андреевич. — Эпир чăваш шкулĕ умĕнчи çӳллĕ хурамасемпе тирексен айĕнче кĕпĕрленсе тăратпăр. Кама вĕренме илни пирки хушу тухса çакасса кĕтетпĕр. Шкул картишĕнче ярмаккари пек. «Вĕренме илмесен мĕнле питпе Элшеле таврăнмалла-ха? — пăшăрханатăп эпĕ. — Аслă урампа иртес çук ĕнтĕ, пахча хыçĕпе утма тивĕ. Ку шкулта манăн виçĕ кукка — Мĕтри, Сантăр, Элексей — вĕреннĕ вĕт».

Шкул алăкĕ хуллен уçăлчĕ те эпир пурте кĕпĕрленсе кăритура кĕрсе кайрăмăр. Списокра пуррисем хăйсен хушамачĕсене курса «урра!» кăшкăрса каялла вирхĕнсе тухаççĕ. Эпĕ те хамăн хушамата шыраса тупрăм. Мĕн тери савăнтăм! Училище ячĕ хăй мĕне тăрать: Яковлев шкулĕ. Ĕмĕтленни çитрĕ! Пирĕншĕн пурте çĕнĕ: вĕрентекенсем, Сĕве хĕррипе лартса тухнă хĕрлĕ кирпĕч çуртсем, мастерскойсем...

Чи юратнă вĕрентекенсем Петр Тимофеев математик, Николаев географ, чăваш чĕлхин методикипе чистописани учителĕ Петр Иванович Павлов пулнă. Вĕсем пире училище историйĕпе, унăн иртнĕ пурнăçĕпе паллаштаратчĕç. «Çак пӳлĕмре пĕр класрах чăваш улăпĕсем Константин Иванов, Тайăр Тимкки тата Марфа Трубина вĕреннĕ, тепĕр пӳлĕмре — Максимов-Кошкинский, Николай Шупуççынни, Федор Павлов», — тесе кăтартатчĕç.

### «Нарспи» çыракансем

Пĕррехинче Константин Ивановпа Николай Шупуççынни пĕр пӳлĕме вăрттăн хупăнса ларнă та икĕ талăка яхăн ниçта тухмасăр сăвă çырнă. Пĕрле вĕренекенсем вĕсене пач çухатнă. Çакă Иван Яковлев хăлхине те кĕнĕ. Вăл пӳлĕм алăкне шаккать те шаккать, туйипе те тĕке-тĕке илет — никам та сасă памасть. Иван Яковлевич алăка çĕмĕрсе кĕрессипе хăратсан çеç уçса кĕртеççĕ ăна. Вăл пӳлĕме кĕрсе тăрать те шалт тĕлĕнсе каять. «Нарспи» авторĕ çăварĕнчен пирус кăлармасăр вĕçе-вĕçĕн туртнăран алăкран тĕтĕм мунча хутнă евĕр палкаса тухать. «Разбойниксем, çичас милĕк илсе килетĕп те тип мунча кĕртетĕп. Юрать-и çапла пуçтахланса ашкăнма, этăккăсем», — лешсен сăн-пичĕ хĕреличченех пăскăртса илнĕ тет вара.

Çав çулсенче пирĕн училищĕне Илпек Микулайĕ, Николай Евстафьев, Стихван Шавли, Валентин Урташ тата Иван Григорьев çыравçăсем час-часах пырса çӳретчĕç. Эпир вĕсене ăмсанса пăхаттăмăр. Тимлĕ итлеттĕмĕр. Ялти шкулта вĕреннĕ чухне хамăр район хаçачĕпе Хусанти «Хĕрлĕ ялав» хаçата кĕске заметкăсем çырса тăнă та — питĕ çыравçă пулас килетчĕ. Эх, ача чунĕ, çунатлă ĕмĕчĕ...

Студент училищĕри литература кружокне çӳрет, «Ульяновская правда» хаçата статьясемпе тĕрленчĕксем çырса тăрать. Çавăн пекех район хаçачĕсемпе те çыхăну тытать.

### Вĕрентекен, тĕпчевçĕ

Педагогика училищи хыççăн Роман Чепунов Калуга хулинчи авиадивизире çар тивĕçĕсене пурнăçлать. Летчиксемпе салтаксен кулленхи пурнăçне çар чаçĕнчи «Крылья Родины» хаçатра тăтăшах çутатса тăрать.

Çартан таврăнсан Элшел каччи И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет. Çак çулсенче çамрăк студент литература кружокне çӳрет, чăваш çыравçисен пултарулăхне тĕпчет. Часах «Тăван Атăлпа» «Ялав» журналсенче унăн Г. Тимофеев, В. Урташ, В. Ухли пултарулăхне тĕпченĕ статйисем пичетленсе тухаççĕ.

1962 çулта Роман Чепунов педагогика институтĕнчен вĕренсе тухать. Михаил Сироткинпа Владимир Канюков ăна Чăваш кĕнеке издательствинче е хаçат-журнал редакцийĕнче юлма сĕнеççĕ, анчах унăн чунĕ ачасем патне туртăнать. Çамрăк учителе Канаш районĕнчи Çӳлти Вăрманьялти сакăр çул вĕренмелли шкула яраççĕ. Килĕшет ăна учитель ĕçĕ. Çапла вара вăл хĕрĕх çула яхăн Чăваш Енри тĕрлĕ ялта ачасене вĕрентет. Литература ĕçне тума та май тупать. Хăйĕн хайлавĕсенче ял çыннин нумай енлĕ пурнăçне сăнлать.

Эпĕ Роман Андреевичпа хĕрĕх çул каялла «Коммунизм ялавĕ» (халĕ — «Хыпар») хаçатра ĕçленĕ чухне Йĕпреç районĕнчи Эйпеçре паллашнăччĕ. Вăл çак ялти шкулта ĕçлетчĕ. Манран хăш енче çуралнине, вĕреннине ыйтса пĕлчĕ. Эпĕ Тĕрлемесрен тесен савăнчĕ. Хăй студент чухнех «Тăван Атăл» журналта Тĕрлемес çынни Григорий Тимофеев пирки статья çапса кăларни çинчен каласа пачĕ. Тăхăрьял тăрăхĕ чăвашсен илемлĕ литературине Тайăр Тимккипе Юркка Иванне, Мĕтри Юманпа Константин Петрова, Владимир Ухлипе Николай Дедушкина, Александр Кăлканпа Валентин Урташа, Николай Симуновпа Владимир Чебоксарова тата Валем Ахуна парнелени çинчен хăпартланса калаçни те асрах. Тĕлĕнмелле уçă кăмăллă учитель.

Çак тĕл пулу хыççăн Роман Андреевича темиçе çул курманччĕ, хаçат-журналта, паллах, хушаматне сахал мар асăрханă. 1990 — 1997 çулсенче вăл Эйпеç хыççăн Çĕрпӳ районĕнчи Выçикасси вăтам шкулĕнче завучра ĕçлет, пенсие тухать. Икĕ-виçĕ уйăхранах ăна Чăваш ял хуçалăх академийĕн «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнчи «Ял ĕçченĕ» хаçатăн пĕрремĕш редакторĕ пулма чĕнсе илеççĕ. Унта икĕ çул вăй хурать.

### «Ахальтен чĕре çунмарĕ»

Пĕррехинче «Тăван Атăл» журналта ĕçленĕ чухне эпир Юрий Айдаш поэтпа редакци архивĕнчи кивĕ ал çырăвĕсене тĕрĕслерĕмĕр. Алла Роман Чепуновăн «Ахальтен чĕре çунмарĕ» повеçĕ лекрĕ. Вунă çул ытла тусан пухса выртать иккен. Алăпа çырнă, машинкăпа çаптарман. Вулама тертлĕ, нушаллă. Икĕ-виçĕ эрне хушшинче иксĕмĕр те вуласа тухрăмăр. Илемлĕ хайлав! Редакцилерĕмĕр. Владимир Агеев художника повеçе илемлетме ӳкерчĕксем тутартăмăр. Журналăн 2000 çулхи вун пĕрмĕш номерне «Ахальтен чĕре çунмарĕ» повеçпе уçрăмăр.

– Повеçре ялти шкул пурнăçне çутатнă, — журнал тухсан хăй шухăшне пĕлтерчĕ пире Роман Андреевич. — Унăн сюжетне эпĕ хамăн тата тепĕр учителĕн пурнăçне илсе сăнарланă. Произведени чылай çул кун çути кураймарĕ. Повеçе çырса пĕтернĕ хыççăнах пĕр шаннă юлташа вуласа пăхма сĕннĕччĕ. Вăл ăна тимлĕн тишкерсе тухнă та кӳршисене парса янă. Лешсем вулаççĕ те хушамачĕсем хăйсен мар пулин те повеçри ĕçсене кура хăйсене палласа илеççĕ. Пуçланчĕ вара ял-йышра пăтăрмах, тĕрлĕ калаçу. Ĕç-пуç парти райкомĕ таранах çитрĕ. Пĕтрĕ тĕнче! Çавăн чухне эпĕ илемлĕ литература вăйĕпе витĕмне пуçласа туйса илтĕм.

Повеç тухнă хыççăн Роман Андреевич хавхаланса пурăнчĕ. Редакцие хайлав хыççăн хайлав çĕклесе килме пуçларĕ. Эпĕ ас тăвасса унăн «Шăпчăксем шăпланнă каç», «Хумсемшĕн канăç çук», «Чунăм сан патнах туртатчĕ», «Телейрен тармаççĕ», «Каçĕ мĕншĕн кĕске-ши?», «Çаврăннă кăмăл» тата ытти хайлавĕсене вулакансем ăшшăн кĕтсе илчĕç.

### Мĕншĕн çапла калатпăр?

Роман Чепунов пултарулăхĕнче, ытти çыравçăсемпе танлаштарсан, тата тепĕр урăмлăх пур. Вăл чĕрĕк ĕмĕр ĕнтĕ чăвашсен аваллăхĕпе çыхăннă, хамăр куллен усă куракан сăмах майлашăвĕсем мĕнле пулса кайнине тĕпчет. Вĕсемпе «Хыпар» хаçатри «Мĕншĕн çапла калатпăр?» ярăм вулакансене паллаштарать. Ку ĕçре анлă тавра курăм, пысăк тӳсĕмлĕх кирлĕ. Çак тапхăрта Роман Андреевич 550 çунатлă каларăш пĕлтерĕшне уçса пачĕ. Вĕсене пухса уйрăм кĕнеке кăларсан та чăваш халăхĕшĕн питĕ усăллă пулĕччĕ.

Пурнăç пăрăнăççăр пулмасть. Çурçĕр Кавказра, Аргун çывăхĕнчи пĕр çапăçура вĕсен ывăлĕ — аслă лейтенант-пограничник Игорь Романович Чепунов паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунă. Тӳсрĕ, чăтрĕ кăвак çӳçлĕ ашшĕ. Хуйха-суйха пусармашкăн алăри калеме тата çирĕпрех тытма сăмах пачĕ.

Роман Чепунов вулакансем патне 7 повеçпе 20 калав çитерчĕ. Унăн произведенийĕсенчи сăнарсем хăйсенчи çынлăхăн ырă енĕсене, пархатарлă шухăш-кăмăлне темĕнле йывăр та хирĕçӳллĕ лару-тăрура та упраса хăварма пĕлнипе, хăйсен совеçне укçапа мул серепине çакланса сутманнипе палăрса тăраççĕ. Çав персонажсем хӳтлĕхсĕр тăрса юлнă çыннăн нушине ăнланма пĕлнипе кăна мар, кирлĕ вăхăтра татăклă пулăшу пама пултарнипе те («Çаврăннă кăмăл» калаври Тимук мучи) уйрăлса тăраççĕ. Çыравçă вулакана нихăçан та: «Ун пек ан пул, ак çакăн пек пул», — тесе хăйĕн шухăшне йышăнма хистемест. Вăл ял ыйтăвĕсене йăлт хăйне майлă татса парать.

Халĕ çыравçă мăшăрĕпе Мария Егоровнăпа Шупашкар районĕнчи Сапаккасси ялĕнче пурăнать. Ял ĕçченĕсен хастар авторне Роман Андреевич Чепунова 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Телей, ырлăх-сывлăх, пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**33. Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит, торф.** Доставка. Т. 89053465671.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор сумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1056 Тираж 4403


* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.